1906 çулхи январён 21-мёшёнче тухма тытăннă 1918 çулхи февраль уйăхёнчен тёрлё ятпа тухнă 1991 çулхи августăн 30-мёшёнче "ХЫПАР" ятпа тепёр хут тухма пуçланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никёслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

236/26642/ № Кёçнерникун, 2014, декабрь/раштав, 11 Хакё ирёклё www.hypar.ru

Вёри шыв хаклана-нать. Мёншён тата мён чухлё? 2

Ăслă технологи-сем... вăрлама пулăшаççё 3

«Хыпар» турнирё пулнă, пур, пулать! 4

Çурхи шыв-шур текех хăратаймё

Декабрён 9-мёшёнче Çёрпўре ейўрен хўтёленмелли сооруженисен комплексён иккёмёш черетне савăнăçлă лару-тăрура уçрёç. Питех те пысăк пёлтерёшлё çак пулăмпа вырăнти халăха Чăваш Ен Пуçлăхё Михаил Игнатьев саламларё.

cap.ru сайчён сăнўкерчёкё

«Кашни çуркунне тенё пекех Çёрпў хулин пёр пайне тата Виçпўрт салине шыв илес хăрушлăх тухса тăратчё. Çав тăрăхра пурăнакансем пăшăрханатчёç, пурлăхёпе выльăх-чёрлёхё шар курасран вёсене урăх çёре куçаратчёç. Çёрпўри çурхи шыв-шуртан хўтёленмелли сооруженисен строительстви питё пёлтерёшлё пулнăран эпё ку ыйтăва федераци шайёнче сўтсе яврăм. Пысăк та хаклă çак проекта пурнăçа кёртрёмёрех», – палăртрё Михаил Васильевич.

Район пуçлăхё Татьяна Кузьмина çынсем Çавал çыранран тухма пултарнăран çуркуннене шикленсе кётнине аса илчё. 2006 çулта ейўрен хўтёленмелли сооруженисен пёрремёш черетне ёçе кёртнё: икё дамбăран пёрне хёрарăмсен Тихвин мăнастирне, теприне Çёрпўри Хёвелтухăç ураменчи уйрăм çуртсене шыв илес хăрушлăхран сыхлама тунă. Çапах çак мерăсем хула тата çывăхри ял территорийёсене çурхи шыв-шур сиен кăтартасран туллин хăтарайман. Çавна май Чăваш Ен Пуçлăхё Михаил Игнатьев федерацин Шыв ресурсёсен агентствин ертўçипе Марина Селиверстовăпа тёл пулнă, хўтёлев сооруженийёсен иккёмёш черетне тума йышăннă. Хальхи техника требованийёсене туллин тивёçтерекен çак проектăн пётёмёшле хакё – 204,9 млн тенкё, çав шутран 171,42 млн тенкё – федераци бюджетёнчен. Проектпа килёшўллён икё дамба, виçё шлюз-регулятор, куçса çўрекен виçё насус станцийё, электроснабжени сечёсем тунă.

Михаил Игнатьев инженери хўтёлев гидротехника сооруженине хута яни Çёрпўсемшён питё пёлтерёшлине палăртрё: вăл Мăн тата Кёçён Çавал ейёве сарăлас-тăк Çёрпў хулипе Виçпўрт салин территорийёсене – 267 çурта /вёсенче 1 пин ытла çын пурăнать/, культура еткерён, ЖКХ тата социаллă объектсене, пётёмпе 203 га лаптăка – шыв илесрен хăтарать-çке. Чăваш Ен Пуçлăхё çак сооруженисене тумашкăн хастар хутшăннă çынсене Тав çырăвё тата сехет парса чысларё. Юлашки çулсенче Çёрпў хулипе районён аталанăвне укçа нумай хывнине, социаллă пёлтерёшлё çёнё объектсем хута янине каларё.

Атăлăн çўлти бассейнён шыв управленийён ертўçи Александр Баринов Раççей Федерацийёнче шыв хуçалăхён комплексён аталанăвёпе çыхăннă программăпа килёшўллён регион территорийёнче пурнăçланакан проектсенче Чăваш Ен Пуçлăхён тўпи пысăккине палăртрё. Программăна чăна çавăрмалли механизм регионран тата муниципалитетран килнине асăнчё.

Виçпўрт салинче пурăнакан Нина Борисова тата хёрарăмсен Тихвин мăнастирён настоятельници Нина матăшкă республика ертўçисе не, проекта пурнăçа кёртме хутшăннă çынсене чёререн тав турёç, «Ейў пире текех хăратаймё», – терёç савăннине пытармасăр.

Михаил Игнатьев хёрарăмсен Тихвин мăнастирне те кёрсе курчё. Вырсарни шкулёнче 11-мёш класс вёренекенёсемпе «Раççей çамрăкёсем» темăпа иртекен историпе литература урокён пёр пайне итлерё. Чиркёве кёрсе çурта лартрё, реставрацилекен храмра ёçсем мёнле пынипе палăшрё.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

КАШНИ ÇУРКУННЕ ТЕНЁ ПЕКЕХ ÇЁРПЎ ХУЛИН ПЁР ПАЙНЕ ТАТА ВИÇПЎРТ САЛИНЕ ШЫВ ИЛЕС ХĂРУШЛĂХ ТУХСА ТĂРАТЧЁ. ÇАВ ТĂРĂХРА ПУРĂНАКАНСЕМ ПĂШĂРХАНАТЧЁÇ, ПУРЛĂХЁПЕ ВЫЛЬĂХ-ЧЁРЛЁХЁ ШАР КУРАСРАН ВЁСЕНЕ УРĂХ ÇЁРЕ КУÇАРАТЧЁÇ

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхён 2014 çулхи декабрён 9-мёшёнчи 164-мёш указёпе килёшўллён Чăваш Республикин ырлăхёшён нумай çул тўрё кăмăлпа ёçленёшён тата общество ёçё-хёлёнчи хастарлăхшăн "Чăваш Ен" санатори" акционерсен уçă обществин генеральнăй директорне – тёп врачне, Шупашкар хула депутачёсен Пухăвён депутатне **Юрий Леонидович СИМУНОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă,

халăхăн йăла ыйтăвёсене тивёçтерес енёпе тунă тава тивёçлё ёçсемшён тата нумай çул тўрё кăмăлпа вăй хунăшăн "Эткер" акционерсен хупă обществин генеральнăй директорне, Шупашкар хула депутачёсен Пухăвён депутатне **Валерий Аркадьевич ПАВЛОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН ЙĂЛА ЫЙТĂВЁСЕНЕ ТИВЁÇТЕРЕССИН ТАВА ТИВЁÇЛЁ ЁÇЧЕНЁ"** хисеплё ят панă,

вырăнти хăйтытăмлăха аталантарас ёçе пысăк тўпе хывнăшăн тата нумай çул тўрё кăмăлпа ёçленёшён Шупашкар хулин Мускав район администрацийён пай пуçлăхне **Александр Петрович ЕВДОКИМОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫРĂНТИ ХĂЙТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЁСЕНЧЕ ТЎРЁ КĂМĂЛПА ЁÇЛЕНЁШЁН"** Мухтав паллипе наградăланă.

* * *

Чăваш Республикин Пуçлăхён 2014 çулхи декабрён 10-мёшёнчи 165-мёш указёпе килёшўллён ветерансене социаллă пулăшу кўрес тата общество ёçёнче çамрăксене патриот воспитанийё парас енёпе хастарлăх кăтартнăшăн Вăрçă, ёç, Хёçпăшаллă вăйсен тата право сыхлавён органёсен ветеранёсен /пенсионерёсен/ Чăваш Республикинчи общество организацийён председательне **Анатолий Ялмарович ПУККИЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă.

ПУÇАРУ

«Сывлăх профилё» сывлăха упрама пулăштăр

2014 çулхи июлён 31-мёшёнче Чăваш Республикин Пуçлăхё Михаил Игнатьев «Чăваш Республикинче пурăнакансен пурнăç пахалăхне ўстерес тата сывлăхне çирёплетес тёлёшпе йышăнакан хушма мерăсем çинчен» Указ хатёрленё. Хамăрăн тăрăхра «Сывлăх профильне» йышăнассине шăпах официаллă çав документпа килёшўллён пуçарнă та. Вăл халăхăн пурнăç пахалăхне тата сывлăхне лайăхлатмалли республикăн малашнехи аталанăвён стратегийё евёрех.

Ăна çак кунсенче çирёплетнё. Унăн тытăмне çакнашкал пайсем кёнё: «Чăваш Республикинчи медицинăпа демографи лару-тăрăвён тёп енёсем», «Сывлăха çирёплетме витём кўрекен факторсем», «Халăхăн пурнăç пахалăхне ўстерес, сывлăхне çирёплетес тёлёшпе йёркелекен мероприятисене информаципе коммуникаци пулăшăвёпе тивёçтересси», «Чăваш Республикин халăх сывлăхне сыхлас тата çирёплетес хутлăхёнчи приоритетлă тёллевёсем». Çак документа хатёрлемешкён влаçăн тёрлё шайёнчи органёсем, общество пёрлешёвёсемпе организацийёсем хутшăннă. «Сывлăх профильне» йёркелеме Чăваш Ен Сывлăх сыхлавёпе социаллă аталану министерстви кăçал кёркунне республикăра пурăнакан граждансемпе ирттернё ыйтăм та пулăшнă: çынсен шухăшне шута илнё.

Профиль пирён тăрăхри çынсен сывлăх тăрăмёпе паллаштарнисёр пуçне ăна витём кўрекен, медицинăпа çыхăнман факторсене те тёпчет. Вёсен шутёнче – пурнăç тата ёç условийёсем, производство хутлăхё, апатлану, тавралăх уйрăмлăхё, пурăнмалли кётесри условисем, общество сывлăха сыхлани, пурнăç йёрки, ёçпе тивёçтересси т.ыт.те.

Кунашкал документ сывăх вăхăтрах кашни районăн хăйён пулё. Муниципалитетсен профилёсене хăйсен территори уйрăмлăхёсемпе килёшўллён, вырăнти факторсене тёплён тёпчесе хатёрлёç. Çакă кашни хутлăхăн демографи лару-тăрăвне лайăхлатма май паракан стратеги планё пулё.

■ **Ирина ИВАНОВА**

ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

«Пресса валли мар» сăмахсем, чёлхе урокё...

Кун пеккине, ЧР Пуçлăхё Михаил Игнатьев министрсене Правительство ларăвён тўрё трансляцине чарсах тустарнине, астумастăп. Ёнерхи ларура çапла пулчё…

Çакă РФ Президенчё хăйён Çырăвёнче патшалăх шайёнчи тăкаксене 5% чакарасси пирки каланипе çыхăннă. Вице-премьер – финанс министрё Светлана Енилина Чăваш Енён çитес виçё çуллăх бюджетне пурнăçламалли мерăсем çинчен калакан саккун проекчёпе паллаштарнă май шăпах çакна палăртрё те – Михаил Васильевич хамăрăн «тухăçсăр тăкаксемпе» кăсăкланчё. Светлана Александровна республика ку енёпе кăçал кăна 900 млн тенкё ытла перекетлени çинчен каларё. Апла пулин те республика ертўçине çакă çырлахтармасть пулас, «тухăçсăррисем» пирки вăл «пур, пур...» терё. Çавна май бюджет учрежденийёсен централизациленё бухгалтерийёсене йёркелес ёç мёнле пынипе интересленчё.

Кашни министртан хурав ыйтрё. Шел те, пурте тивёçтермелле хурав параймарёç. Вёрентў министерстви ку ёçе туллин пурнăçлайман, Çутçанталăк ресурсёсен министерстви пирки те çавнах каламалла. Культура министрне Михаил Игнатьев «мён калаçатăр эсир, патшалăх министрё юлташ?» тесех пўлчё. Михаил Васильевич шухăшёпе – финансистсем хăйсен ёç вырăнёсене çухатасран шикленеççё, çавăнпа централизацие хирёç. Çавна май Шалти ёçсен министерстви ярса панă доклад хутёнчи йёркесене вуласа пачё. Унта такамсем больницăсен тёп врачёсем патне телефонпа шăнкăравлани пирки каланă. Çав çынсем сиплев учрежденийёсенче финанс тёрёслевёсем пуласси пирки пёлтернё, çав тёрёслевсем больницăсен ертўçисемшён ăнăçлă иртчёр тесен укçа тўлемелле-мён. Мён тетёр, тёп врачсенчен хăшёсем çав ултавçăсене укçа куçарса панă! Пётёмлетў уçăмлă: шикленеççё тёк, эппин, хăрамашкăн сăлтавёсем пур.

Михаил Игнатьев çакăнпа кăна та çырлахмарё – тата та хивререх каларё пулас, анчах ку сăмахсем пирён хăлхана кёмерёç. Вăл «калаттăп – пресса валли мар...» терё те трансляцие чарчё. Шел, тута тăрăх вулама пёлместпёр... Лару «сасăллă» пулса тăнă хыççăн вара ыйтăва пётёмлетсе бухгалтерисен хайхи оптимизаци-централизаци ёçне апрелён 1-мёшё тёлне вёçлеме хушрё.

Ларăвăн кун йёрки самай анлă пулчё – кашни ыйту пирки чарăнса тăни кирлех мар-тăр. Çапах спорт министрё Сергей Мельников хăй ертсе пыракан ведомство ёç-хёлё çинчен тунă доклад пирки тёплёнрех калани вырăнлă. Чăваш Ен спортпа тусли вăрттăнлăх мар. Ку енёпе малашне те çине тăрса ёçлесшён. 2020 çул тёлне республикăра пурăнакансен ыйшён 40 процентёнчен кая мар пайён спортпа туслашмалла. Халё ку кăтарту, министр каланă тăрăх, 37% патнелле. Доклада чăвашла тунă пулсан – хирёçлемелли сăлтав та тупăнмастчё ёнтё. Анчах Сергей Владимирович çакăн пирки каланă май «около 37%» терё. Михаил Васильевич вара цифрăсем тёлёшпе яланах питё тимлё – документра 37,2% тесе çырнине асăрхарё. Апла-тăк мёншён – «около»? «Пире шкулта урăхларах вёрентетчёç», – терё вăл «около» сăмах «яхăн» пёлтерёшлине палăртса. Министр ку тёслёхре «около» «сахалраха» та, «нумайраха» та пёлтерме пултарать терё-ха, пурпёр ЧР Пуçлăхне ўкёте кёртеймерё, хайхи «около» вырăнне «более» çырма килёшрё.

● ➡ 2 стр.

Уяв ячёпе!

Хаклă ентешёмсем!

Сире Раççей Федерацийён Конституцийён кунё ячёпе саламлатăп!

Çёршывăмăрăн Тёп Саккунё Раççейён кашни гражданинён прависемпе ирёкёсене гарантилет, демократи обществин аталанăвне çирёп никёслет. Вăл патшалăх кашни çыншăн пысăк пёлтерёшлё, гуманизм, тёрёслёх тата пёртанлăх принципёсем çинче никёсленнё хаклăхсене хўтёленине сăнарлать. Вăлах гражданла тăнăçлăхпа килёшёве упракан, демократи институчёсене çирёплетекен гарант пулса тăрать.

Пётём Раççейпе пёрле Чăваш Республики, хăйён потенциалне пурнăçа тухăçлă кёртсе, обществăпа экономикăри лăпкăлăхёпе тăнăçлăхне упраса, мал енне çирёппён утать. Çакăнпа пёрлех вăл чёлхене, истори йăли-йёркине упрама, республикăмăрти тёрлё наци çыннисемпе тёрлё тёне ёненекенсем валли аталанма пёрешкел условисем туса парать.

Пирён пёрлехи пархатарлă ёçёмёр малашне те Раççей Федерацийён Конституцийёнче çирёплетнё ырă тёллевсене пурнăçлас ёмётлё пуласси пирки иккёленместёп.

Сире çирёп сывлăхлă пулма, хамăрăн вăй-хăватăмăра шанма, мёнпур ырă пуçарура ăнăçу, телей тата ырлăх сунатăп!

Чăваш Республикин Пуçлăхё
М.ИГНАТЬЕВ.

* * *

Хисеплё ентешёмсем!

Чăваш Республикин Патшалăх Канашён депутачёсен корпусён ячёпе Сире Конституци кунёпе саламлатăп!

Раççей Конституцийё – демократиллё право патшалăхён аталанăвён никёсё. Эпир паян çёршывăн Тёп Саккунёпе пурăнатпăр, пуласлăха йёркелетпёр.

Эпир, Раççей Федерацийён нумай нациллё халăхё, чаплă çак уява Раççейре гражданла тăнăçлăхпа килёшў çирёппишён чунтан хавхаланса кётсе илетпёр.

Эпир Тăван çёршывăмăра чечекленекен, вăйлă та никама пăхăнман çёршыв пек курасшăн, анчах çёршывăн паянхи историне пурте пёрле тăрăшса, ырми-канми ёçлесе, хамăрăн талантпа усă курса кăна çырма май пуррине те ăнланмалла.

Конституци нормисем çине таянса эпир юратнă Раççейён тата тăван Чăваш Енён социаллă пурнăçёпе экономика аталанăвён ыйтăвёсене малашне те ăнăçлă татса парăпăр. Пирён республика производство, çутçанталăк тата çынсен хăвачёпе яланах тухăçлă усă курё, граждансен пурнăç шайне çёклесе малалла сулмаклăн утё.

Хаклă ентешёмсем! Сире çирёп сывлăх, телей, ыранхи куна шанма сунатăп. Сирён мёнпур ёçёрпе пуçарăвăра ăнăçупа çитёнў пулăшса пыччăр.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашён
Председателё Ю.ПОПОВ.

Çёнё çул йыхравлать

Çёнё çул çывхарса килет. Çакна кашни утăмра асăрхатăн. Наци музейён ёçченёсем çак уява нихçанхинчен те киленўллёрех тăвас, унта хула çыннисене ытларах яваçтарас тёллевпе ятарласа «Çёнё çул – музейре» проект хатёрленё.

Унпа килёшўллён тёрлё мероприяти ирттерме палăртнă. Сăмахран, декабрён 9-мёшёнче «Çёнё çул экспресё» интерактивлă курав ёçлеме пуçланă та ёнтё. Декабрён 31-мёшёччен музейре «Хёл Мучи мастерскойё» ёçлё.

Тёрлё çёршывра Çёнё çула мёнле паллă тунине пёлес килет-и? Ун çинчен те каласа кăтартёç кунта. Каникул вăхăтёнче йёркелекен ытти мероприяти – «Ура! Каникул!», «Раштав пирёштийё», «Туслăх открыткăран пуçланать» – шкул ачисене çеç мар, студентсене те кăсăклантарасса шанаççё музей ёçченёсем.

Н.ГЕОРГИЕВА.

Паттăрлăх – вилёмсёр

Тăван Çёршыв Паттăрёсен кунне 2007 çултанпа паллă тăваççё. Ку уяв паянхи Раççейшён уйрăмах пёлтерёшлё: вăл Хёç-пăшаллă вăйсен мухтавлă историне упрама, пархатарлă йăли-йёркине ламран лама куçарса пыма пулăшать. Кашни çёршывăн хăйён паттăрёсем пур. Çамрăк ăру вёсен тёслёхёпе хавхаланса ўсет, ырă ёçсем патне ăнтăлма вёренет.

Етёрнери ача-пăча библиотекинче «Паттăрлăх вилёмсёр» мухтав сехечё иртрё. 1-мёш гимназире вёренекенсем мультимедиа презентацине пăхнă май Раççейре паттăрлăхшăн паракан пысăк наградăсемпе, Георгий хёресён кавалерёсемпе, Совет Союзён тата Раççей Геройёсемпе паллашрёç. А.Невский, А.Суворов, Г.Жуков, Л.Голиков, Ф.Орлов тата ытти паттăрсен ячёсем вилёмсёррине, вёсем Тăван çёршыв хўтёлевçисемшён чăн-чăн тёслёх пулса тăнине курса ёненчёç.

Унтан гимназистсем «Паттăрлăх страницисем» викторинăна хутшăнчёç. Кашни команда историпе, Геройсемпе çыхăннă ыйтусене хуравларёç. «Тăван çёршыв ывăлёсем, эпир сирёнпе мухтанатпăр!» курав çитёнсе пыракан ăрава мирлё пурнăçшăн çапăçнă аслă çар пуçёсен, харсăр салтаксен паттăрлăхё яланах асра пулмаллине тепёр хут çирёплетрё.

И.СЕРГЕЕВА.

Çанталăк çинчен

Паян пёлётлё çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хёвелтухăçёнчен 3 метр хăвăртлăхпа вёрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 6, çёрле 7 градус сивё.** Атмосфера пусăмё 759 мм, сывлăшри нўрёк 88 процент.

Кун тăршшё 7 сехет те 3 минут.

Ыран пёлётлё çанталăк пулать, юр çукалать. Çил кăнтăртан 5 метр хăвăртлăхпа вёрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2 градус сивё, çёрле 0 градус.** Атмосфера пусăмё 752 мм, сывлăшри нўрёк 87 процент.

Кун тăршшё 7 сехет те 1 минут.

Халăх фрончĕ критиклеме шиклемест

Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн Чăваш Ен регион штабĕн Шупашкарта иртнĕ анлă ларăвĕнче сăмах, тĕпрен илсен, ноябрĕн 17-18-мĕшĕсенче Мускавра ĕçленĕ иккĕмĕш форумĕн ĕçне тата Раççей Президенчĕ Владимир Путин декабрĕн 4-мĕшĕнче Федераци Пухăвне янă Çырăвне тĕплĕ тишкерни тавра пычĕ. Тĕп ĕçтăвкомăн федерацин Атăлçи регионĕнчи 6 субъект кураторĕ Маргарита Алексеева ларура иртнĕ тапхăрти ĕç-хĕле пĕтĕмлетрĕ.

Халăх фрончĕн регион уйрăмĕн çум председателĕ Николай Казаков анлă ларăва уçнă май регион уйрăмĕ, малтанхи вăхăтра тӳрех пĕр туртăмпа ĕçлесе каяйманни, анчах унăн ĕçтăвкомне йĕркелесен, хастар та пуçаруллă çынсеннен штаб туса хурсан ĕçсем çийĕнчех лайăхланма тытăннине палăртрĕ. «Регион уйрăмĕ Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн ĕçхĕлне палăрăмлă витĕм кӳчĕ, унăн тĕп пĕтĕмлетĕвне иккĕмĕш форум ĕçĕнчен эпир лайăх пĕлетпĕр», – терĕ вăл. Çум председатель 5 çĕрте ирттернĕ дискуссисен площадкинче кулленхи пурнăçăн пахалăхĕпе, социаллă тĕрĕслĕхпе, обществăпа влаç хушшинчи çыхăнупа, ялхуçалăх производствипе, ют çĕршывсеннен кӳрсе килекен апат-çимĕçпе промышленноç таварĕсене хамăрăннисемпе улăштарассипе çыхăннă çивĕч ыйтусене хускатни çинчен каласа кăтартрĕ.

Николай Нилович шухăшĕпе вĕсен йышĕнче пысăках мар пĕлтерĕшли, вак-тĕвексен шутне кĕрекенни пачах çук. Сăмахран, пирĕн республикăри 29 мемориал комплексĕнчен виççĕшĕнче кăна «Астăвăм çулăмĕ» çунать. Чылайăшĕ таçанах юрăхсăра тухнă е юхăнса кайнă. Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнă кун тĕлне вĕсене пурне те юсаса хута ямалла. Е тата тепĕр пулăм. Украинăра граждан вăрçи пуçлансан унти халăх хӳтлĕх шыраса пирĕн республикăна та йышлăн килсе çитнĕ. Анчах, шел пулин те, хăшпĕр çĕрте вĕсене тивĕçлĕн йышăнман, пулăшма тăрăшман. Влаç тытăмĕнчисен енчен кӳрентернĕ тĕслĕхсем те пулнă, пулман мар.

Халăх фрончĕн регионти уйрăмĕ ытти сферăри ыйтусемпе те кăсăклансах тăрать. Июнь уйăхĕнчи тĕрĕслев Вăрнар поселокĕнчи пурăнма юрăхсăр темиçе çурта тупса палăртнă. Çыннисене çĕнĕ, хăтлă хваттерсене куçармалли реестра та кĕртмен иккен. Тĕрĕссипе, асăннă çуртсем нимĕнле балансра та шутланмаççĕ. Малтанах çак хуралтăсем Раççей чукун çулĕн пулнă, вăл вĕсене каярахпа хăйĕн балансĕнчен кăларсан хуçасăр тăрса юлнă. Район администрацийĕ кăна «вăхăтра асăрхаман». Ялĕк салинче юрăхсăр çуртсенче пурăнакансене туса çитермен çурта куçарни палăрнă.

– «Аварийллĕ çĕнĕ çурт» тенине пуçласа тĕл пултăмăр. Асăннă темăна эпир чи малтан çĕклерĕмĕр, – терĕ Николай Казаков. – Пирĕн тĕллев айăплисене тупса явап тыттарасси мар, влаç органĕсемпе пĕрле çакнашкал çивĕчленнĕ ыйтусене татса парасси. Хамăр ĕçе экспертсене, общество хастарĕсене, вĕренӳ заведенийĕсенчи пысăк квалификацийлĕ специалистсене, влаç тытăмĕнчи яваплă çынсене тата ыттисене хутшăнтаратпăр. Çавăнпа та пĕрлехи вăйпа, пĕр тĕллевпе ĕçлесе нумай ыйтăва татса пама пултартăмăр...

Ларура çĕнĕ шухăш-сӳнӳ çителĕклех пулчĕ. Раççей Президенчĕн шаннă çынни, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ – тĕп редакторĕ Валерий Туркай, акă, Шупашкар ГЭСĕн шăпи пирки питĕ пăшăрханса калаçрĕ, вăраха кайнă ыйтăва çӳллĕ шайра хальтерех татса памаллине пĕлтерчĕ, унсăрăн вăл татах кăткăсланасси уçăмлă. Мускавран килнĕ Маргарита Алексеева куратор Валерий Владимировичпа килĕшрĕ, ку ыйтăва виççĕмĕш форумра çĕкленме хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ. Валентина Теллинăна, Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачне, çĕршыври медицина тытăмне çĕнетсе улăштарассипе çыхăннă оптимизацие мĕн тĕллевпе пуçарни пăшăрхантарать. Ку ыйту форумăн «Социаллă тĕрĕслĕх» площадкинче ахальтен çĕкленмен. Мĕншĕн тесен халăх сиплевĕнче чылай çул ĕçлесе пысăк опыт пухнă врачсен, медицина сестрисен больницăсенчен кайма тивет. Оптимизацин тĕллевне медицина пĕрлĕхĕ ăнланмасть тата йышăнмасть. Ижевскра, акă, педиатрсем сивлев акцине ирттернĕ, Ĕпхӳре выçă тытма пуçланă. Халăх фрончĕн Тĕп штабĕн членĕн, Наци медицинин палатин ертӳçин Леонид Рошаль шухăшĕпе, медицинăри тӳре-шара çак майпа сывлăх сыхлавçисен шалăвне ӳстересшĕн иккен.

Халăхпа канашламасăр, унăн шухăш-кăмăлне пĕлмесĕр тунă ĕç халăха хирĕçле çаврăнса ан тухтăр тесе тата пурнăçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕллевпе Халăх фрончĕн регионти уйрăмĕн ĕçтăвкомĕн штабĕн çитес тапхăрти ĕçĕ-хĕлĕн планне тĕплĕн тишкерсе çирĕплетрĕç.

■ **Юрий ЛИСТОПАД.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ

«Пресса валли мар» сăмахсем, чĕлхе урокĕ...

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Çакнашкал чĕлхе урокĕ хыççăн каласу кал-кал кайрĕ. Чăваш Енре юлашки çулсенче кăна спортăн 65 объекчĕн реконструкцийĕпе строительствине 5,5 млрд яхăн тенкĕ хывнă. Министр çирĕплетсех каларĕ: «Спорт сооружениййĕсем валли çакăн чухлĕ укçа уйăрни республикăра халиччен пулман». Кăмăллă тепĕр самант: çĕршывăн Олимп командисен йышĕ валли хатĕрлекен ентешĕмĕрсен шучĕ 40% пысăкланнă. Çав вăхăтрах халиччен пирĕн спортсменсем спортăн икĕ енĕпе кăна хатĕрленнĕ, кăçал вара – 5 енпе.

«Медальсемпе таврăнĕç-и?» – кăсăкланчĕ Михаил Игнатьев. «Пурте мар, анчах хăшĕсем медальпе таврăнаççех», – шантарчĕ министр. Михаил Васильевич çапла ыйтни ахальтен мар ĕнтĕ, вăл иккĕленмест: «Пысăк укçа хыватпăр пулсан – тивĕçлĕ кăтартусем пулмаллах». Çакă çынсен сывлăхĕшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ. РФ Президенчĕ чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсемпе кĕрешмелли çулталăк пирки каланине аса илтернĕ май Михаил Васильевич çынсене сиплеме укçа нумай тăкакланине палăртрĕ, спорт ку енĕпе те пулăшма тивĕç. Çавăнпах спорт керменĕсем пушă лармалла мар: «Миллиардсем тăкакласа чаплă сооруженисем тума пулать, анчах унта çынсем çӳремесен çав объектсем вилĕ капитал кăна пулĕç».

Çавăнпах-тăр министерствăсенче, вĕсене пăхăнса тăракан учрежденисенче ĕçлекенсем ГТО комплексĕн нормативĕсене мĕнле пурнăçлани пирки ыйтрĕ. Педагогсен 50% çав нормăсене ăнăçлă пурнăçланипе кăмăллă пулчĕ. «Врачсем вара? ГТО нормисене куççульпе пурнăçласçĕ-и е хавхаланса тупăшаççĕ-и?» Михаил Игнатьевăн шӳтлесерех панă çак ыйтăвне Чăваш Енĕн «тĕп врачĕ» Алла Самойлова çавнашкал сĕмпех хуравларĕ: «Куççуль витĕр хавхаланса...»

Вăлах Украинăран кунта тарса килнисене вăхăтлăха вырнаçтармалли йĕркепе паллаштарчĕ. Нушаллă çынсем пирки каланă май Чăваш Ене килекенсем валли 12 пункт хатĕрленине палăртрĕ. Анчах вĕсенчен 4-шĕпе кăна усă курнă. Хăшĕсем каяççĕ, теприсем килеççĕ. Паян пĕтĕмпе – 104 çын. Хăшĕ-пĕри хваттер тара илет, çавна май реабилитаци центрĕнче, сăмахран, халĕ пĕр çемье кăна пурăнать. Асăннă йышши 37 çынна ентешĕмĕрсене куçармалли программăна кĕртнĕ. Пурне те тивĕçлĕ пулăшу параççĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

✓ МИХАИЛ ВАСИЛЬЕВИЧ ШУХĂШĔПЕ – ФИНАНСИСТСЕМ ХĂЙСЕН ĔÇ ВЫРĂНĔСЕНЕ ÇУХАТАСРАН ШИКЛЕНЕÇÇĔ, ÇАВĂНПА ЦЕНТРАЛИЗАЦИЕ ХИРĔÇ

Премисене камсем илĕç?

ЧР Журналистсен союзĕ республикăри журналистсен 2014 çулăн çуллен паракан Çемен Элкер, Николай Никольский тата Леонид Ильин ячĕллĕ пермийĕсене илме тăратакан ĕçсене йышăнассине вĕçленĕ. Конкурс ĕçĕсемпе документсене республикăри, районсенчи, Чĕмпĕр облаçĕнчи массăллă информаци хатĕрĕсен редакцийĕсем, Чăваш наци конгресĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ, Россельхознадзорăн республикăри управленийĕ, Чăваш кĕнеке издательстви, Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕ тăратнă.

Çемен Элкер ячĕллĕ премие илме тăратнă ĕçсен авторĕсен йышĕнче – Чăваш наци радиовĕн аслă редакторĕ **Роза Деменцова,** Хĕрлĕ Чутай районĕн «Пирĕн пурнăç» хаçачĕн корреспонденчĕ **Альбина Замуткина,** «Информ-Медиа», «Стимул» ОООсен тĕп редакторĕ **Владимир Иванский,** «Хыпар» хаçат тишкерӳçи **Ирина Клементьева,** «Советская Чувашия» хаçат корреспонденчĕ **Леонид Никитин,** «Хресчен сасси» хаçат корреспонденчĕ **Ирина Никитина,** «Грани» хаçатăн пай редакторĕ **Ирина Павлова,** «Республика» хаçат директорĕ /тĕп редакторĕ/ **Лидия Филиппова.**

Николай Никольский премине илме тăратнă ĕçсен авторĕсен йышĕ те суйласа илмелĕх пур: Чĕмпĕр облаçĕнчи чăвашсен «Канаш» хаçачĕн корреспонденчĕ **Елена Алексеева, Владимир Зырянов, Валерий Комиссаров, Надежда Осипова** /И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн журналистика кафедри/, «Хыпар» хаçатăн социаллă пурнăçпа вĕрентӳ пайĕн редакторĕ **Ирина Иванова,** ЧНК президенчĕн общественноçпа çыхăну тытакан пулăшуçи **Зоя Яковлева.**

Россельхознадзорăн Чăваш Енри управленийĕн информацине аналитика пайĕн тĕп специалист-экспертĕн /пресс-секретарĕн/ **Надежда Васильевăн,** «Хыпар» Издательство çурчĕн штатра тăман корреспонденчĕн **Герман Желтухинăн,** Хĕрлĕ Чутай райадминистрацийĕн информаци ресурсĕсен секторĕн тĕп специалист-экспертĕн **Лариса Зайцевăн,** Вăрмар районĕн «Хĕрлĕ ялав» хаçачĕн ял хуçалăхĕпе социаллă политика пайĕн редакторĕн **Алевтина Николаевăн** ĕçĕсене вара **Леонид Ильин ячĕллĕ премие** илме тăратнă.

Премисене парас енĕпе ĕçлекен комиссисен уйăнче – яваплă тивĕç: унăн пултаруллă авторсен мĕнпур ĕçĕпе тĕплĕн паллашса чи лайăххисене палăртмалла. Лауреатсен ячĕсем 2015 çулхи январьте паллă пулĕç.

■ **К.АНТОНОВ**

Пĕтĕмлетӳ тăвиччен...

Культура çулталăкĕ вĕçленсе пырать. Унччен вара Элĕксем хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне кăтартма тĕв тунă. Декабрĕн 8-мĕшĕнче Элĕк районĕнче «Культура эрни» старт илнĕ.

Вăл салари культурăпа кану центрĕнче иртнĕ çамрăк артистсен концертĕнчен, спектакль сыпăкĕсене кăтартнинчен пуçланнă. Пухăннисем Ю.Мишшин – «Пукане», Т.Рикăн – «Сӳрĕк кăмăла сиплекен эмел», «Урасем утмаççĕ» юмахсене, «Шăна кăмпи» спектакле курса савăннă. «Культура эрнинчи» мероприятисен программи питĕ анлă та киленӳллĕ. Кунта фестивальсем, литература каçĕсем, концертсемпе куравсем, кĕнеке презентацийĕсем йĕркелеме палăртнă. Вĕсене аслисемпе пĕрле çамрăксене те, ачасене те явăçтарĕç.

А.ГРОМОВА.

Владимир Путин Президентăн Çырăвне хакласçĕ

Николай КАЗАКОВ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Композиторсен союзĕн председателĕ:

– Раççей Президенчĕ Владимир Путин тĕрĕс каларĕ – кашни çыннах нумай енлĕ аталанма çителĕклĕ майсем туса памалла. Манăн шухăшăмпа, паянхи кун ку питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Валентина ГЕВОРКЯН, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ артистки, Чăваш Республикин халăх артистки, профессор:

– Раççей Президенчĕн пĕтĕм шухăшĕпе килĕшетĕп. Пултаруллă, çĕршыва чунтан парăннă, малашлăхлă çамрăксене ытларах хатĕрлемелле. Эпĕ хам та ачасемпе ĕçлетĕп, вĕсен таланчĕсене уçма, Турă панине аталантарма тăрăшатăп. Çапла тума тĕрлĕ конкурс, фестиваль ирттерни пулăшать. Ачасене амăшĕн чĕрипе, чунĕпе юратмалла. Çавăн чухне кăна вĕсен чун-чĕринче çутă ĕмĕт-тĕллев çуратма пулать.

Федор КАРЯГИН, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историграфи факультечĕн профессорĕ:

– Çĕнĕ технологисене аталантарма, конкурентлă продукци кăларма, финанс тытăмне çирĕплетме, промышленноçа хăватлăлатма пирĕн çутçанталăк ресурсĕсем те, ăслăлăх ĕçĕсем те, шалти рынок та пур. Ĕç вăйĕ те çителĕклех. Ытти енĕпе те чухăн мар. Строительство индустрине, экономикăн ытти отрасльне ыранхи куншăн туллин ĕçлеттерме пултаратпăр.

Президент Çырăвĕ, манăн шухăшăмпа, – тĕплĕ, тулли, уçăмлă. Унти тезиссем пирĕн республикăшăн та питĕ витĕмлĕ. Шанатăп: республика ертӳлĕхĕ ăна туллин пурнăça кĕртĕ.

Александр ШЕГУРОВ, Чăваш Ен Пуçлăхĕ çумĕнчи каçарас енĕпе ĕçлекен комисси председателĕ:

– Раççей Президенчĕн кашни сăмахĕ, сĕнĕвĕ пуриншĕн те çывăх тата ăнланмалла. Вăл пирĕн патшалăхăмăрăн вăйхăватне туйма, хăйĕн суверенитетне тата никама пăхăнманлăхне упраса хăварма пултарнине çирĕплетет. Президент патшалăхăн нумай енлĕ ĕç-хĕлĕн тата çĕршыври кашни çынна пырса тивекен ыйтусене хускатрĕ.

Манăн ĕç биографийĕ ытларах бизнесри, предпринимательлĕхри тавлашуллă ыйтусене татса парассипе çыхăннăран шăпах вĕсем çинче чарăнса тăрасшăн. Çырура пур ыйтăва та саккунпа килĕшӳллĕн уçăмлатмаллине çирĕп палăртнă. Президент çавăн пекех контролерсемпе тĕрĕслевçĕсен питĕ пысăк йышне, бизнес ĕç-хĕлĕнче право саккунĕсем мĕнле ĕçлессишĕн яваплă органсемпе должноçри çынсене ку е вăл бизнес аталанасси, унăн шăпи çав тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсенчен нумай килнине асăрхаттарчĕ. Президент Çырăвĕнче бизнеса аталантарма, унăн ĕç-хĕлне лайăхлатма, тавлашуллă ыйтусене тĕрĕс тата вăхăтра татса пама сĕнни паянхи кунпа килĕшӳллĕн çыхăнса тăрать. Юлашкинчен çакă экономикăна лайăх, нимле санкцисемсĕр аталанма, çĕршыври çынсен пурнăç шайне лайăхлатма пулăшĕ.

КОНКУРС

Стартует Всероссийский конкурс "Правовая Россия"

Реклама

Уже десятый год подряд Российская ассоциация правовой информации ГАРАНТ при поддержке Совета судей РФ объявляет о начале Всероссийского профессионального конкурса "Правовая Россия".

Стать участником может любой гражданин России с высшим или незаконченным юридическим, экономическим образованием, а также журналисты. Уровень профессиональных знаний конкурсантов традиционно определят члены Научно-экспертного Совета и Жюри, в состав которых вошли председатель Конституционного Суда РФ Валерий Зорькин, советник Президента РФ Вениамин Яковлев, статс-секретарь - заместитель министра культуры РФ Григорий Ивлиев, президент Федеральной нотариальной палаты, президент Московской городской нотариальной палаты Константин Корсик и другие.

Для участия в конкурсе достаточно иметь выход в Интернет. Конкурс бесплатный и дистанционный, что позволяет проверить свои знания желающим из всех уголков России.

Как стало известно из опросов, участники в первую очередь воспринимают конкурс как возможность оценить собственные способности и повысить свой профессиональный уровень. А ценные призы - это далеко не главное. Рабочие места почти 60 тысяч юристов, экономистов и журналистов из всех регионов России - от Калининграда до Южно-Сахалинска украшают дипломы об участии в конкурсе.

Десятый, юбилейный Конкурс "Правовая Россия" проводится **по 11 номинациям:**

- конституционное, государственное право;
- гражданское право;
- трудовое право;
- финансовое, налоговое право;
- гражданский и арбитражный процесс;
- уголовное право, уголовный процесс;
- административное право;
- корпоративный юрист;
- информационное право;
- Правовая надежда России (специальная номинация для студентов высших учебных заведений, обучающихся по юридическим или экономическим специальностям);
- СМИ за Правовую Россию (специальная номинация для журналистов, работающих в средствах массовой информации).

Каждый год "Правовая Россия" предлагает самые интересные задания. Отборочный тур - это тест из 15 вопросов из различных отраслей права. Участникам, прошедшим в основной тур, жюри предложит практические задачи - кейсы, на которые необходимо будет дать развернутый ответ. Согласно Положению о конкурсе, юристам и экономистам предоставляется возможность участвовать в двух номинациях, наиболее предпочтительных для каждого участника.

Победители и лауреаты в каждой из них будут награждены почетными дипломами и ценными призами: 1 место - ноутбук, 2 место - планшетный компьютер, 3 место - цифровая фотокамера.

Для участия в конкурсе "Правовая Россия" необходимо зарегистрироваться на странице конкурса на сайте www.garant.ru. Регистрация и отборочный тур стартуют 12 декабря 2014 года.

ООО "Гарант-Чебоксары", тел. 43-95-25

ГАРАНТ ИНФОРМАЦИОННО-ПРАВОВОЕ ОБЕСПЕЧЕНИЕ

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

Вĕри шыв хакланать. Мĕншĕн тата мĕн чухлĕ?

Теми, хваттерсенчи вĕри шывпа, унăн хакĕпе çыхăннăскер, чăннипех кăткăс, уншăн тӳлемелли виçе хакланасси куçкĕрет, эппин, халăх кăмăлсăрланасси те часах. Çавăнпах-тăр ытларикун ку ыйтушăн яваплă темиçе ведомство представителĕсем журналистсемпе ятарласа курнăçрĕç, лару-тăрăва уçăмлатрĕç.

Конкуренци политикипе тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертӳçин заместителĕ Марина Кадилова палăртнă тăрăх – халĕччен республикăра вĕри шыв тарифне 1 кубла метршăн шутласа палăртнă. Унăн тытăмне 1 м³ сивĕ шыв /е теплоноситель/ тата ăна ăшăтма кирлĕ энерги хакĕсем кĕнĕ. Вăйра тăракан норма акчĕсем тарифсене çак икĕ компонента уйăрса палăртма хистеççĕ. Çурта вĕри шывпа тивĕçтермелли хупă система чухне тариф сивĕ шывпа ăшă энергийĕн компоненчĕсенчен тăрать, уçă системăра – теплоносительпе ăшă энергийĕн компоненчĕсенчен.

Çавăнпа кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пĕр компонентлă /вĕри шывăн кубла метрĕшĕн/ тытăма икĕ компонентлипе улăштарнă. Анчах чăрмав пур: тарифне çирĕплетнĕ, халăха тивĕçтерекен вĕри шыв хакне шутласа палăртмалли методикăна вара йышăнман. Вăл халĕ те проектра кăна.

Çавна май, Стройминăн пай пуçлăхĕ Татьяна Черменинова каланă тăрăх, право вакуумне пĕтерес тĕллевпе шыва ăшăтмалли вăхăтлăх нормативсемпе усă курма сĕннĕ. Юрĕ, вулакана арифметика вăрттăнлăхĕсемпе йăлăхтарар мар, чи кирли пирки каласа хăварни вырăнлă. Ку цифрăсемпе Çурт-йĕр инспекцийĕн пай пуçлăхĕ Галина Кошелева паллаштарчĕ. Хайхи икĕ компонента тĕпе хуракан çĕнĕ методикăпа килĕшӳллĕн Шупашкарта «Коммуналлă технологисем» ООО потребительсене уçă системăна паракан вĕри шывăн 1м³ хакĕ 120,46 тенкĕпе танлашать. Декабрĕн 1-мĕшĕччен 102,23 тенкĕ пулнă. Хупă системăра та ӳсĕм курăмлă: 88,26 вырăнне 106,49 тенкĕ пулать. ТГК-5 тивĕçтерекен вĕри шыв та çав хурăмах хакланать.

✓ ХАЛИЧЧЕН ÇУРТ-ЙĔРЕ ХУТСА ĂШĂТНĂШĂН ÇУЛТАЛĂК ТĂРШШĔПЕХ ВĂТАМ ВИÇЕПЕ ТӲЛЕСЕ ПЫНĂ, МАЛАШНЕ ВАРА БАТАРЕЙĂСЕМ ВĔРИ ЧУХНЕХИ УЙĂХСЕНЧЕ ÇЕÇ ТӲЛĔПĔР

Ӳсĕм ăçтан тупăнать-ха? Унччен вĕри шывăн 1м³ хакĕ çирĕплетнĕскер пулнă, ăна ăшăтма каякан ăшă энергийĕн чăннинчен пĕчĕкрех нормативĕпе усă курнă. Ку хупă системăна пырса тивнĕ. Сăмах май, хупă системăра хăш-пĕр хваттерте аллăлли типĕтмелли стандартлă пăрăхсем мар, пысăккисене лартни, урайсене хайхи вĕри шыв шучĕпе виçе пĕчĕкленĕ, çавăнпа кунта хваттершĕн хывакан пĕтĕмĕшле тӳлев ӳсесси иккĕленӳллĕ.

Квитанцисенчи цифрăсем çынсене кăмăлсăрлантарма пултарассине тĕп хулан ЖКХ управленийĕн пуçлăхĕн заместителĕ Павел Порфирьев та палăртрĕ. Кунта вĕри шыв хакланни кăна та мар-çке. Халĕччен çурт-йĕре хутса ăшăтнăшăн çулталăк тăршшĕпех вăтам виçепе тӳлесе пынă, малашне вара батарейăсем вĕри чухнехи уйăхсенче çеç тӳлетпĕр. Эппин, укçана курттăмăн кăларса пама тивĕ. Калăпăр, декабрьте шартлама сивĕ пулчĕ тĕк – квитанцире те ăшăшăн тӳлемелли виçе пысăк пуласси иккĕленӳсĕр. Çурт-йĕре хутса ăшăтнă чухнехи уйăхсенче квитанцири пĕтĕм виçен 70% шăпах ăшăшăн ăшăтни, çавăн йышши ытти сăлтав та хаксене пушшех пысăклатаççĕ. Уçă системăра вара хайхи «ытлашши» хак çурт-йĕре хутса ăшăтмалли тӳлевсен шутне кĕрсе кайнипе курăнман. Çавна май кунашкал системăллă çуртсенче вĕри шывшăн тӳлев хакланĕ, çав вăхăтрах ăшăшăн тӳлекен хывмалли тӳлев пулма пултарать.



Çийĕнчен халăх çуртйĕрĕн капиталлă юсавĕшĕн тӳleме пуçлать – хваттерĕн кашни тăваткал метрĕшĕн 5,2 тенкĕ /январьтен – 5,5 тенкĕ/. Каллех – тӳлевсен ӳсĕмĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ управляющи компанисенчен пĕрин ертӳçи, журналистсемпе тĕл пулма чĕннĕскер, пытармарĕ: лаптăкĕпе стандартлă шутланакан икĕ пӳлĕмлĕ хваттершĕн хуçисен малашне 4,2 пин тенке яхăн тӳлемелле пулать. Çавна май брифинга килнĕ яваплă чиновниксем те çынсене хваттер тӳлевĕ тĕлĕшпе субсиди илмелли мелпе усă курма сĕнчĕç. Субсидие маларах та нумайăн илнĕ-ха, малашне вара ăна ыйтакансен, çак правăпа усă курмалли право пуррисен шучĕ самай пысăкланасси куçкĕрет.

Журналистсем ресурссен тарифĕсен çитес çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕртме хатĕрленекен ӳсĕмĕпе те кăсăкланчĕç. Марина Кадилова пулас тарифсене палăртас енĕпе ĕçлеме тытăннине çирĕплетрĕ. Халлĕхе прогноз çаплара: ăшă тата электричество энергийĕн хакĕсем 8,8% ӳсĕç, шыв – 12,2, газ 7,5% хакланĕç. Тӳлевсен чи пысăк пĕтĕмĕшле ӳсĕмĕ 11,2% ытла пулмалла мар. Чăн та, уйрăм муниципалитетсем инвестици йышши проектсене пурнăçламаллипе сăлтавласа çав чи пысăк виçе картинчен тухмашкăн ыйтма та пултараççĕ иккен. Кунашкал ыйтусем тариф службине Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Лапсар ял тăрăхĕн администрацийĕсенчен килнĕ. Патăрьелсемпе Çĕмĕрлесен те çавнашкал кăмăл пур-мĕн, анчах, Марина Витальевна каланă тăрăх, «вĕсенчен пирĕн пата тивĕçлĕ ыйтусем килмен-ха».

■ **Николай КОНОВАЛОВ.**

В.КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ

Йěр тăрăх

Áслá технологисем... вáрлама пулáшаççé

Банк карточкисемпе тимлě пулăр

Укçан мар тӳлев инструменчě вырăнěнчи банк карточкисемпе Раççейре нумаях пулмасть кăна, 2000 çулсен пуçламăшěнче, анлăн усă курма тытăнчěç. Тӳлевěн çак механизмě меллě пулнипе, вăхăта перекетленипе лайăх – пластик карточкăсем çавăнпа хăвăрт сарăлчěç ěнтě. Çапах вěсен çаврăнăшě вăйлă аталанни преступниксене те илěртет. Тӳлевсен универсаллă инструменчě вěт – ултавçăсемшěн те меллě. Шел, финанс ěçхěлěнче усă куракан ăслă технологисем ултавçăсене те пулăшаççě.

Акă Алевтина Г. пенсионерка та /паллă сăлтавсене кура унăн тата статьяра асăнакан ытти çын ят-шывне улăштартăмăр/ банк карточки чăннипех лайăххине хăй курса ěненнě. Чăваш Ен хěрарăмě юлашки вăхăтра Мускавра хěрě патěнче пурăннă, апла пулин те пенси илес енěпе чăрмав тухса тăман. Уйăхсерен «Maestro» пластик карточка çине 11 пин тенкě ытларах куçса пырать – кирек хăш хулара та кирлě чухлě илме пулать. Тепěр тесен апат-çимěçе хěрě туяннă, хěрарăмăн ытти тăкак пулман, çавна май карточка çинчи укçапа та сайра усă курнă – пенси унтах капланнă.

Вак-тěвекпе банкомат патне çӳремен, хăш чухне кăна пысăк укçа илнě – 1 пин тенкěрен кая мар. 2013 çулхи июльте Алевтина Михайловна Болгарие кайнă, унта икě эрне пулнă. Таврăнсан Мускавра хěрě патěнчех юлнă. Августра шăл сиплеме укçа кирлě пулнă та – банк карточки çинчен 30 пин тенкě илнě. Ун чухне карточка çинчи укçа чакнине сисмен-ха. Пěлтěрхи октябрьте тăван ене, Канаша, мăнукěн çуралнă кунне килнě. Кун пек чухне, килěшетěр пуль, кунченеçпе парне кирлех. Çывăх çыннисене савăнтарас тесе хěрарăм банкоматран 10 пин тенкě илнě. Çавăн чухне асăрханă: банк карточки çинчи укçа чакнă пек. Тен, пенсие куçарман?

Темиçе кунран вăл Шупашкарта Перекет банкěн уйрăмне кайнă. Укçине тěрěслеттернě те – тěлěнсех кайнă: хăй пěлмен-туман çěртенех укçи темиçе хут такамăн шучě çине куçнă иккен. «Хамăн банк карточки çинче эпě яланах 70-80 пин тенкě тытнă. Тем пулас пур: текех çамрăк мар ěнтě, сывлăх та хавшакрах, çавăнпа укçана сых ятне упраттăм. Шăпах çав укçа çухалнă...» – ăнлантарать Алевтина Михайловна.

Перекет банкěн сервис центрěнче унăн укçине /пěтěмпе 51 пин тенке яхăн/ «мобильнăй банк» мелпе куçарнине пěлтернě. Унпа пенсионерка усă курма та пěлмест. Апла тăк кам хăтланнă? Хěрарăм полицирен пулăшу ыйтнă.

Банк технологийěсемпе çыхăннă çакнашкал ултава шалти ěçсен органěсенче пуçласа курмаççě. Шут çинчи укçа мěнле майпа «пăсланнине» часах тěпчесе пěлнě. УК 158 статйин 2 пайěн «в» пункчěпе /ют пурлăха вăрттăн, гражданина пысăк сиен кӳмелле вăрлани/ пуçарнă уголовлă ěç тěрěслěхе çиеле кăларнă.

> 1000, 7000, 2000 ПИН ТЕНКĚ КУÇАРНĂ. КАРТОЧКА ХУÇИ ÇУХАТĂВА КĚÇ-ВĚÇ АСĂРХАССА ТУЙСА ИЛĚ, УННЧЕН ЮТ «ЕНЧĚКЕ» ЫТЛАРАХ ПУШАТСА ЮЛАС ТĚЛЛЕВ ТЫТНĂ ТЕЙĚН

Акă мěн палăрнă: «Maestro» пластик карточка илнě чухне Алевтина Михайловнăн МТС сотовăй компанири ...894 цифрăсемпе вěçленекен абонент номерне «мобильнăй банк» пулăшу ěçěпе çыхăнтарнă. Вăл банка е унăн терминалěсене каймасăрах укçа куçарма май парать. Чăн та, ку пулăшу ěçěпе хěрарăм усă курман – кăткăс япалана ăнланса пěтереймест, тепěр енчен, кирлех те пулман. 2011 çулхи апрельте унăн хайхи номерлě сим-карти ваннă. Ку номер текех çук, унпа никам та усă кураймě тесе шутланă май ватă çын çěнě сим-карта илнě. Сотовăй компани – çавах, анчах абонент номерě – урăххи. Унпа паян кунченех усă курать. Анчах банка çакăн çинчен пěлтермен. Кăлăхах...

...Етěрне районěнчи Ачак ялěнче пурăнакан Александр М. 2013 çулхи çуркунне пěлěшěнчен Вениамин Т.-ран хăйěн паспорчěпе райцентртан симкарта туянса килме ыйтнă. Лешě хирěçлемен, темиçе кунран МТС компани сим-картине пěлěшне килне пырсах панă. Вулакан тавçăрчě пуль: Александра шăпах хайхи ...894 цифрăсемпе вěçленекен номер лекнě. Унченхи хуçи, Алевтина Михайловна, ун пирки шухăшлама та маннă ěнтě. Анчах банкра çак номер ун çинчех шутланнă, банкран çав номер çине хăйсен клиенткине тěрлě пěлтерӳсем ярсах тăнă. Халě вара çав пěлтерӳсене номерěн çěнě хуçи илме пуçланă.

Малтан Александр 900 номерпе Перекет банкěнчен килекен смс-пěлтерӳсем çине алă сулнă-ха. Унта вăл пěлмен темле банк карточки çинчен укçа илнине, унта укçа куçарнине кăтартакан пěлтерӳсем пулнă. Çамрăк çын çав смс-пěлтерӳсем унăн номерě çине йăнăшпа килнине питě лайăх ăнланнă. Анчах вăхăт иртнě май ямăттипе усă курас кăмăл çěнтернě-çěнтернех. 2013 çулхи июльте Александр «телей» шыраса пăхас тенě: «мобильнăй банк» сервиспа усă курса телефон урлă ют банк карточки çинчен хăйěн сим-карточки çине 300 тенкě куçарнă.

Пěтěмпех ăнăçлă пулнă. Явап тыттарманни вара преступникшăн актера алă çупса хавхалантарнă пекех. Малтан пысăк укçа куçарман, çапах каярахпа шиклěх туйăмě сирěлнě, «аппетит» та ӳссех пынă. 2013 çулхи сентябрьте кăна вăл «мобильнăй банкпа» çичě хут усă курнă. Уголовлă ěçре пěтěмпе вара çакнашкал тěслěхсем икě теçеткене яхăнах. Октябрěн 7-мěшěнче вăл пěр талăкра ют укçана виçě хут тăкаклама ăс çитернě: 1000, 7000, 2000 пин тенкě куçарнă. Карточка хуçи çухатăва кěç-вěç асăрхасса туйса илě, унччен ют «енчěке» ытларах пушатса юлас тěллев тытнă тейěн.

«Лавкка» шăпах октябрьте хупăннă – Алевтина Г. банка тата полиция кайсан. Сыщиксем укçа куçăмне йěрленě те Вениамин Т. /...894 телефон номерě ун ячěпе çырăннă-çке/ çине тухнă. Унăн вара ют çылăхшăн явап тытас килмест. Повестка илсен полиция вăл чăн преступникпе, хайхи симкартăпа усă курнă Александр М.-па, пěрле пынă. Лешě тунса тăман. Чăн та, 158-мěш статьяпа тăратнă айăплава туллин йышăнмасть. Следствин вара иккěленӳ çук: унăн айăпне ěнентерме материал çителěклě. Çавна май уголовлă ěçе суда тишкерме панă.

Александр – маларах та судпа айăпланнăскер, ун тěлěшпе административлă надзор мелěпе усă курнă. Апла тăк – тивěçлě пěтěмлетӳ туман, тӳрě çул çине тăрас темен, каллех пěлсе тăрса преступлени тунă. Çавна май хальхинче яваплăх та çирěпрех пулнинчен тěлěнмěпěр. Уголовлă кодексăн асăннă статйипе 5 çуллăхах ирěклěхсěр хăварма пултараççě. Тата, паллах, Александрăн пенсионеркăна вăрланă укçана тавăрса пама тивет.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

Следстви

Хирти вáрттáн вил тáпри

Кăçалхи октябрьте Çěнě Шупашкар хулин право хуралěн органěсенчен çамрăк хěрарăм пулăшу ыйтнă: 27 çулти упăшки çухалнă иккен. Ăна арăмě октябрěн 7-мěшěнче юлашки хут курнă, унтанпа пěр сас-хура та çук...

Ун чух преступлени пулнине пěлмен-ха, анчах Следстви комитечěн химиксен хулинчи пайě ěçпуçа вăраха ямасăр Уголовлă кодексăн 105 статйин 1-мěш пайěпе /çын вěлерни/ уголовлă ěç пуçарнă. Шел те, следовательсен иккěленěвě кěçех тӳрре тухнă. Следстви тата оперативлă шырав ěçěсене пěлсе тата ăнăçлă йěркеленě май çамрăк çын мěнле ларутăрура çухалнине пěлме, унăн пурнăçне татнă çын тата ăна пулăшнисен йěрě çине ӳкме, вěсене тытса чарма май килнě.

Халь преступлени ӳкерчěкě уçăмлă ěнтě. Октябрěн 7-мěшěнче каçхине 27 çулти çамрăк çын хăйěн Шупашкарти 24-ри пěлěшěнчен пулăшу ыйтнă: Шупашкар районěнчи Шăмăшри пěлěшрен кивçен илесшěн – хăвăн машинупа унта илсе кайса килейместěн-и?

Пěрле Шупашкар районěнчи Çěньял каччи те, алă вěççěн тытăçу мелěсемпе кăсăкланаканскер, ларса пынă. Çул çинче шăпах вăл Çěнě Шупашкар çыннипе хирěçсе кайнă. Хирěçӳ машина Шăмăш ялě патěнчи хирте чарăнсан та вěçленмен. Кěçěнни, тытăçас енěпе ăстаскер, аслăраххине хěнесе пěтернě – унăн аяк пěрчисене хуçмаллах. Шел, вăл алă вěççěн хěненипе кăна çырлахман çав. Çěçě кăларнă – ахаль те суранланнăскере мăйěнчен 13 хутран кая мар чикнě.

Шăмăшри пěлěшне чěннě, мěн пулса иртнине каланă та – лешě кěреçесем илсе килнě. Вилле вěсем уйрах чавса чикнě. Преступлени пирки никама та шарламăпăр тесе каварлашнă. Анчах «уй куçлă» текен каларăш ку тěслěхре те тӳрре тухнă. Тěрěссипе, право хуралěн органěсен сотрудникěсем çине тăрса ěçленě – çакă преступление уçса пама пулăшнă.

Малтанах хыпарсăр çухалнăскерěн телефон шăнкăравěсен списокне тěрěсленě. Вăл çухалнă кун унăн телефонěпе такси чěнни палăрнă. Такси службин диспетчерěсем клиентсемпе калаçнине итленě хыççăн çакна çирěплетнě: телефонпа хуçи мар, унăн пěлěшě /шăпах – вилле чавса чикме хуттăннăскер/ калаçнă – çапла майпа следствие арпаштарас, телефон хуçи преступлени пулнă кун хыççăн та чěрě пулнă пек кăтартас тенě ěнтě.

Çěньял каччи, çын вěлернěскер, тěлěшпе УК 105 статйин 1-мěш пайěпе айăплав тăратнă. Унăн икě пěлěшěн УК 316 статйипе /уйрăмах йывăр преступление пытарма пулăшни/ явап тытма тивě. Тепěр тесен следстви вěçленмен-ха, тен, преступленин çěнě саманчěсем те çиеле тухěç.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

Ěç прависене пáсмаççé-и?

Ку енěпе республика прокурорěн ятарлă хушăвě те пур та – прокуратура органěсем ěçлевěн вăрттăн рынокне легализацилес тěллевлě саккунсене пăсасран сыхланас енěпе надзор ěçне вăйлатни куçкěрет.

Тěп хулари Ленин районěн прокурорěн аслă пулăшуçи Фариза Кадырова акă райпрокуратурăн «хěрӳ линийě» ěçлени çинчен пěлтерчě – 62-25-51 телефонпа шăнкăравласа кашниех ěç паракансем çынсен ěçлевпе çыхăннă прависене пăсни çинчен евитлеме пултарать.

Елчěк районěнче вара вырăнти ял хуçалăх предприятийěн экс-директорě суд умне тăнă. Ăна 100 пин тенкěлěх штрафланă. Следстви комитечěн Патăрьелěнчи пайě тěпчесе пěлнě тăрăх – директор пěлтěрхи июнь-август уйăхěсенче хăйěн ěçченне шалу, пětěмпе 45 пин тенкě, тӳлемен. Парăма хăйěн пирки уголовлă ěç пуçарсан тин татнă.

Палăртса хăвармалла: çак директор маларах та Уголовлă кодексăн темиçе статйипе явап тытнă. Пěр фермертан 24 тонна ыраш улталаса илнě – уннăн тӳлемен. Халăха ěçпе тивěçтерекен службăна та суя документсем тăратса укçа илнě. Пěрлех суд йышăнăвěсене пурнăçламаншăн та явап тытнă. Ун чухне ăна 70 пин тенкěлěх штрафланă.

■ **К.АНТОНОВ**

Хаклá трактора йӳнетнé

Çěмěрле районěн сучě «Чăвашавтодор» АУОн вырăнти территори производство управленийěн экс-директорě Владислав Удяков тěлěшпе приговор палăртнă. Ăна хăй ертсе пыракан организаци интересěсене хирěç ěçсем тунăшăн айăпланă.

Удяков хăйне пăхăнса тăракансене предприятин кăкармалли оборудованиллě тракторěн суя документне хатěрлеме хушнă, унпа килěшӳллěн 2,2 млн тенкě ытла тăракан техника хакě пětěмпе те 778 пин тенкě кăна иккен. Çакăн хыççăн ертӳçě трактора йӳнěпе хăйěн пěлěшне сутса янă. Унтан вара хайхискерпе çав трактора организаци арендăна илнине ěнентерекен килěшӳ тунă, куншăн çěнě хуçана 3,5 млн тенкě ытла тӳленě.

Удякова çавăн пекех чикě леш енче командировкăра пулнă май вăрттăн видеокамерăпа диктофонлă ручка туянса Раççее илсе килнěшěн те айăпланă. Ятарлă техника хатěрě шутланаканскере туянма, унпа усă курма юрамасть.

Суд умне тăнăскер хăйěн айăпне йышăннă, ун тěлěшпе ирěклěхне икě çуллăха виçеллě тумалли приговор /вăл вăя кěмен-ха/ палăртнă, 100 пин тенкěлěх штрафланă.

■ **К.НИКОДИМОВ**

Коррупци

Мэр çухатнá миллионсем

Улатăр администрацийěн пуçлăхě суд умне тăрать

Следстви комитечěн республикăри управленийěн уйрăмах пěлтерěшлě ěçсене тěпчекен пайě Улатăр хула администрацийěн пуçлăхě Михаил Марискин тěлěшпе пуçарнă уголовлă ěçе тěпчесе пětернě. Вăл пěччен явап тытмасть, пěрлех унăн заместителě Олег Добрынкин тата вырăнти ЖКХ управленийěн экс-директорě Елена Басюк та суд умне тăрěç.

Марискин тěлěшпе должноç полномочийěсемпе киревсěр тěллевпе усă курнăшăн, саккунлă предприниматель ěç-хěлне чăрмантарнăшăн айăплав тăратнă. Добрынкинăн должноç полномочийěсен картинчен тухнисěр пуçне свидетель пулнă май пěлсе тăрсах суя кăтартусем панăшăн та явап тытма тивет. Басюк вара вěсене саккуна пăсма пулăшнă, хăй те коммерци организацийěнчи полномочисемпе киревсěр тěллевпе усă курнă.

СК пресс-служби следстви версине пěлтерчě. Унпа килěшӳллěн 2008-2009 çулсенче Марискин Басюка Улатăрта çурт-йěр хуçисен юлташлăхěсене /ТСЖ/ туса хуни, вěсем ěçлени çинчен суя документсем хатěрлеме хушнă. Çав юлташлăхсем хулари нумай хваттерлě çуртсен 5% кая мар пайне пěрлештернě имěш. Çакă – ЖКХна реформăлама пулăшмалли фондран тата республика бюджетěнчен çуртсене юсама укçа илмешкěн кирлě услови. Суя документсене республикăн Строительство министерствине ЖКХна реформăлама пулăшмалли фонда ямашкăн панă. Вěсене тěпе хурса Улатăр хулин бюджетне укçа куçарнă.

Ун хыççăн Басюк подряд организацийěсем нумай хваттерлě 44 çурта тěпрен юсанипе çыхăннă ěçсене йышăннине ěнентерекен актсем хатěрленě. Пětěмпе 83,5 млн ытла тенкěлěх ěç пурнăçланă имěш. Чăннипе вара ěç калăпăшě 48,7 млн ытларах тенкěлěх çеç пулнă.

> ПĚТĚМПЕ 83,5 МЛН ЫТЛА ТЕНКĚЛĚХ ĚÇ ПУРНĂÇЛАНĂ ИМĚШ. ЧĂННИПЕ ВАРА ĚÇ КАЛĂПĂШĚ 48,7 МЛН ЫТЛАРАХ ТЕНКĚЛĚХ ÇЕÇ ПУЛНĂ

Асăннă документсене Добрынкина панă, вăл подрядчиксем хăйсен обязательствисене пурнăçланине тěплě тěрěслемесěрех хутсене алă пуснă, саккасçă ячěпе – ЖКХ управленине – укçа тӳлемешкěн ярса панă. Управлени вара подряд организацийěсене хайхи пурнăçламан ěçсемшěн 34,8 млн тенкě тӳленě. Çапла майпа Улатăр хулин бюджетне асăннă виçелěх сиен кӳнě.

Ěç-пуç çакăнпа кăна вěçленмест. Асăннă тапхăртах Марискин çуртсене тěпрен юсама явăçтарнă 11 предприяти ертӳçисене асăннă çуртсенчи пӳлěмсен хуçисем тӳлемелли тӳпене хăйсен шучěне тивěçтерме хушнă. Çав тӳпе республика программипе килěшӳллěн 5% кая мар пулмалла. Директорсем хăйсен предприятийěсем пурнăçланă ěçсене йышăнас, укçа илес тěлěшпе /хула мэрěнчен тем те кěтме пулать вěт!/ чăрмавсем сиксе тухасран шикленнипе саккунсăр çак хушăва пурнăçлама тивнě – саккасçă кассине 7 млн тенке яхăн хывнă.

2011 çулхи август-сентябрь уйăхěсенче Марискин вырăнти тата икě предприяти ертӳçи тěлěшпе влаçпа усă курнă: тивěçлě килěшӳсем çырмасăрах хăйне ятарлă техникăпа пулăшма, хăйěн çуртне çěклемешкěн тимěр-бетон изделисемпе пулăшма ыйтнă. Лешсем хирěçлеймен – çак «пулăшу» вěсемшěн 220 пин ытла тенке ларнă. Укçине мэр пěлтěрхи февральте кăна, следовательсем хăйěн пирки тěрěслев ирттерессине пěлсен, тӳленě.

2011 çулхи çулла тата кěркунне Марискин аукцион, аренда правин рынок хакне палăртмалли ытти мероприяти ирттермесěрех хăйěн пěлěшěсене, çав шутра администрацин тěп бухгалтерне Улатăрти çěр лаптăкěсене /пětěмпе 4 пин тăваткал метра яхăн/ уйрăм çурт строительстви валли арендăна панă. Çав çěрсене илес текенсем татах пулнă – вěсене айккине сирнě. Çийěнчен аренда тӳлевне те пěчěк, 14-30 тенкě шайěнче кăна, палăртнă – аренда тӳлевěн пуçламăш виçинчен 100-200 хут сахалрах! Çавна май лаптăксен çěнě хуçисем вěсене туянмалли право илнě, хула мэрěн йышăнăвěсемпе килěшӳллěн вěсем кěçех çак правăпа усă курнă. Çапла вара муниципалитет хăйěн çěр лаптăкěсене рынокринчен чылай пěчěкрех хакпа уйрăм çынсен харпăрлăхне панă. Çак ултав хулана 1 млн ытла тенкěлěх сиен кӳнě.

Уголовлă ěç материалěсенче Марискин «тăрăшнипе» муниципалитет пысăк çухату тӳснин тепěр тěслěхě те сăнланнă. Вăл муниципалитет харпăрлăхěнчи земснаряда пăхса тăма шаннă коммерци организацийěн директорне хăйěн ячěпе çав техникăна тепěр предприятие арендăна памашкăн килěшӳсем тутарнă. Аренда тӳлевне пěчěклетсе кăтартнă – 500 пин тенкě. Рынокри çак хак 2 млн тенке яхăнах пулнă. Арендăшăн хывнă тӳлев муниципалитет хыснине кěмен, çавна май бюджет ку тěслěхре 3,8 млн тенкěлěх сиен тӳснě.

Çӳлерех асăннă самантсăр пуçне Добрынкин судра хăйне пăхăнса тăракан /каярахпа ăна Улатăр хулинчи çěр лаптăкěсемпе усă курнă чухнехи ултавшăнах айăпланă/ тěлěшпе пуçарнă уголовлă ěçпе суя кăтартусем панăшăн та явап тытать.

Следстви пысăк ěç пурнăçлани куçкěрет. Уголовлă ěç материалěсем кăна – 30 томлăх, вěсенчен 5-шě – айăплав пětěмлетěвě. Çак ěçпе 13 çын – шар курнисем. Допрос тунă свидетельсен йышě те пысăк – 300 çын ытла. Строительствăпа техникăн 44, суд хаклавěн 5 экспертизине ирттерме тивнě. Следователь ыйтнипе суд Марискин тěлěшпе килти арест мелěпе усă курнă, çавăн пекех унăн пурлăхне /гараж тата УАЗ автомобиль/, банкри виçě шутне арестленě. Тата – Басюкăн «Рено» автомобильне, банкри шучěсене.

Следстви иккěленмест: мэрпа унăн «пулăшуçисен» айăпне ěнентермешкěн материал çителěклě. Уголовлă ěçе суда пăхса тухмашкăн панă ěнтě. Муниципалитет чиновникěсен правăна хирěçле ěçěсене СК следователěсем Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийěн, ЧР ШЕМěн экономика хăрушсăрлăхěн тата коррупципе кěрешекен управленийěн районсен пěрлехи пайěн тата Çěмěрле полицийěн коррупципе кěрешекен пайěн сотрудникěсем пěрле тăрăшнипе тăрă шыв çине кăларнине пайăрăн палăртаççě.

■ **Дмитрий НИКОЛАЕВ**

Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатěрленě.

КИРЕ ПУКАНЕ

ЧР парламенчён Председателё Юрий Попов:
«Хыпар» турнирё пулнă, пур, пулать!

«Тимёр вăйăинче» вăйлисем çёнтереççё

Йёпреç районёнчи Пучинкере пурăнакан, кире пуканён спортёнче палăрнă Михаил Петров пирён çёршыври чи лайăх тренерсенчен пёри. Юлашки вунă çулта вăл вёрентсе хатёрленё Джанита Павлова, Марина Федорова, Артем Васильев тата Александр Семенов тёрлё ăмăртура медальсем çёнсе илчёç, Раççей спорт мастерён нормативне пурнăçларёç. Унăн ывăлё Владимир Петров та кире пуканё йăтассипе Европа чемпионё, Пётём тёнчери ăмăртусен темиçе хут призерё пулнă.

Чăваш Республикин тава тивёçлё тренерён вёренекенёсем çак кунсенче кире пуканё йăтассипе «Хыпар» хаçат парнисене çёнсе илессишён Йёпреçри «Патвар» физкультурăпа спорт керменёнче иртнё Пётём Раççейри XXXI турнирта та ăнăçлă ăмăртрёç. Йёпреçсем Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийён, Елчёк районён, Улатăр хулин тата Тутар Республикин командисем хыççăн пиллёкмёш вырăн йышăнчёç. Пучинкери вăтам шкулта тăххăрмёш класра вёренекен Анастасия Николаева 16 килограмлă кире пуканне 100 хут сулласа çёклесе хёрсен ушкăнёнче пёрремёш вырăн йышăнчё. Унăн юлташё, халё ял хуçалăх академийён студенчё Алексей Иванов 32 килограмлă икё снаряда кăкăр çинчен 73 хут тёртрё, икё енлё кёрешўре 131 очко пухса 78 килограмлă атлетсен хушшинче чи лайăх кăтартупа палăрчё, спорт мастерён кандидачён нормативне пурнăçларё. Пучинке шкулён аслă класёсенче вёренекен Иван Майоров, Алексей Леонтьев, Августина Павлова тата Ксения Петрова хăйсен виçисенче тата тёрлё ушкăнра малти вырăнсене йышăнчёç.

18 çултан кёçёнрех яшсен хушшинче кăçал Куславкка хулинчи Дмитрий Константиновпа Патăрьел районёнчи Ринат Сафин уйрăмах пысăк çитёнўсем турёç. Вёсемсёр пуçне хăйсен виçисенче мала тухнă Елчёк районёнчи Андрей Кузнецов, Куславкка районёнчи Д.Кузьминпа В.Христофоров тата Тăвай районёнчи Александр Немов çитес çул Пётём Раççейри яшсен ăмăртăвёсене хутшăнёç.

«Хыпар» хаçатăн парнисене çитённё атлетсен хушшинче Чăваш патшалăх педагогика университечён студентки Екатерина Иванова, ял хуçалăх академийён студенчёсем Вера Николаева, Елизавета Еремеева, Евгений Малинников, Дмитрий Курчин, Иван Угаров, Улатăр пăхаттирё Юрий Синичкин тата Тутарстанран килнё хăна Искандер Шаехов çёнсе илчёç.

Сăмах май, Елчёк районёнчи А.В.Игнатьев олимпиец ячёллё спорт шкулён воспитанникё, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийён студенчё Александр Павлов ку хутёнче «Хыпар» ăмăртăвне килеймерё. Нумаях пулмасть Германире иртнё тёнче чемпионатёнче 78 килограмлă виçере пёрремёш вырăн йышăннăскер çак кунсенче Калугăра иртнё Пётём тёнчери турнира хутшăннă. Унта пирён ентеш икё енлё кёрешўре 205 очко пухса пьедесталăн пёрремёш картлашки çине хăпарнă, тёнче спорт мастерён нормативне пурнăçланă. Маттур каччăна черетлё çёнтерўпе саламлатпăр!

■ **Петр СИДОРОВ.**

Василий КУЗЬМИН сăнўкерчёкёсем



РЕДАКЦИРЕН. Кире пуканё йăтассипе XXXI турнира йёркелесе ирттерме пулăшнăшăн «Хыпар» Издательство çурчё ЧР Патшалăх Канашён Председательне **Ю.А.Попова**, ЧР физкультурăпа спорт министрён çумне **С.С.Шелтуковпа А.И.Воронов** ертсе пыракан специалист-эксперта, Йёпреç район пуçлăхне **А.А.Яковлева** тата район администрацийён ертўçине **Н.П.Чугарова,** социаллă аталану пайён ертўçине **И.В.Алексеевăна,** экономика пайён ертўçи çумне **Т.И.Филипповăна,** Йёпреçри «Патвар» ФСК коллективне /директорё – **Н.А.Михайлов**/, республикăри кире пуканё спорчён федерацийён председательне **Ю.М.Карпова,** ăмăртусен тёп судйине **Б.Н.Глинкина**, **З.П.Иванов** тёп судья çумне, **П.П.Сидоров** судья-информатора, судьясен ушкăнне, *спонсорсене* – «ТУС» строительство компанийё» АХО генеральнăй директорне **Н.Ф.Угаслова,** «Чăваш-регионгаз» ООО генеральнăй директорне **К.С.Мифтахутдинова,** «ЖБК-9» ООО генеральнăй директорне **А.В.Цапулина,** «Вăрнарти аш-какай комбиначё» АУО генеральнăй директорне **Н.В.Аливанова,** «Вăрнар «СОМ» завод» ООО генеральнăй директорне **Ф.Н.Волкова,** Чăвашпотребсоюз председательне **В.М.Павлова**, «Август» АХО «Вăрнарти хутăш препаратсен завочё» филиалён директорне **В.В.Свешникова,** «Россельхозбанкăн» Чăваш Енри филиалён ертўçине **И.Н.Письменскаяна**, «Эткер» АХО генеральнăй директорне **В.А.Павлова,** «Водстроймонтаж» ООО генеральнăй директорне **В.А.Марушева,** «Нива» УКК» автономи учрежденийён директорне **В.А.Яковлева,** «Информ-медиа» РПФ директорне **Э.Н.Максимова** тата **Е.А.Геронтьевăна** менеджера ăшшăн тав тăватпăр.

«Çырансене» çыхăнтаракан «кёпер»

Çак кунсенче Çёнё Шупашкарти Юрий Гагарин ячёллё тёп вулавăшра Чăваш Республикин Пуçлăхён культурăпа искусство енёпе паракан грантне тивёçнё «Жизнь – книга…»: Дни Айги в Чувашии» проектăн презентацийё иртрё.

Айхи кунёсен тёшши – поэтăн ёç-хёлёнчи пёлтерёшлё саманта /ăна сăнарлăн чăваш-па ытти халăхăн культурисен çыранне çыхăнтаракан «кёпер» пек ăнланмалла/ çутатса пани. Çавăнпа та «Айхи-кёперпе» чăваш «çыранёнчен» вăл хатёрленё чăваш поэзийён антологийё /ăна венгрла, итальянла, французла тата акăлчанла куçарнă, çавăн пекех кёскетсе нимёçле, шведла пичетленё/ ишет. Тепёр «çырантан» эпир ентешёмёр чăвашла куçарнă «Франци поэчёсем», «Венгри поэчёсем», «Польша поэчёсем» антологисене илтёмёр. «Айхи-кёперён» юхăмё малалла пырать. Кăçал поэтăн «Мир Сильвии» кёнеки кун çути курчё.

Проекта пурнăçа кёртнё май Шупашкарта И.Макаревичпа В.Пикин сăнўкерчёкёсен куравё, Геннадий Айхин «Расположение счастья» сăвăсен кёнекин, ытти кăларăмăн презентацийёсем иртнё, поэтăн «Чёрё тёвё» поэмине вуланă, «Ман Айхи» темăпа «çавра сётел», Настя Новикован иллюстрацийёпе курав йёркеленё. Шупашкарта, Патăрьел районёнчи Çёньялта тата Улатăрта музыкăпа поэзи каçёсем пулнă.

Юрий Гагарин ячёллё вулавăшри презентацие Геннадий Николаевичăн пултарулăхне хисеплекенсем пуçтарăннă. Проект авторё Ольга Федотова пурнăçланă ёçсемпе паллаштарчё. Тёлпулăва малалла Олег Улангин тăсрё.

Методикăпа йёркелў пайён библиотекарё Екатерина Матвеева, Çёнё Шупашкарти 6-мёш гимназире вёренекен Наталья Бахарева, Юлия Гаврилова, Дарья Иванова тата Дарья Скопенок, ют чёлхесен «Ăнăçу чёлхи» шкулён ертўçи Александр Блинов, çавăн пекех И.Н.Ульянов ячёллё Чăваш патшалăх университечён студентки Дина Тимрукова, хулари 2-мёш шкулти библиотекарь Светлана Гитуляр тăрăшнипе кёнекери сăвăсене харăсах тăхăр чёлхепе вулама май килчё.

Республикăри «Айхи фончён» ертўçи Атнер Хусанкай тата Олег Улангин çамрăк куçаруçăсен конкурсён çёнтерўçисемпе унта хутшăннисене дипломсемпе тата кёнекесемпе чысларёç.

■ **Н.ГЕОРГИЕВА**

Чуна уçса каласма пулать

Китайра пёчченлёх ыйтăвё çав тери çивёчленсе çитнё – кунта санпа пёрле «макăрма» пултаракан çынна саккас парса чёнсе илме пулать. Ятарласа «вёрентнё» çамрăк арçынсемпе хёрарăмсем пурнăç пирки ўпкелешекен пёччен клиентсене яланах пулăшма хатёр. Çакăншăн 20-30 юань /120-190 тенкё/ тўлемелле.

Виртуаллă «тантăш» çынна телефонпа шăнкăравлать, ăна хумхантаракан ыйтусемпе каласать. Сире ирхине вăратаççё, çывăрма выртас умён ырă каç сунаççё, ырă сăмахпа хавхалантараççё...

Китайсем çёнёлёхшён хытă савăннă. «Эсир манăн ёмёте чăна çавăртăр, кунне 30 юань çеç тўлемелле тата!» – тет Интернетпа усă куракан.

Факс: /8352/ 28-83-70 E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчё, 13-мёш çурт, 316-мёш пулём
ПЁЛТЕРЎ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Новоахпердинского сельского поселения Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет:
- с кадастровым номером 21:08:140101:151 площадью 85500 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Новоахпердинское с/пос.;
- с кадастровым номером 21:08:140401:292 площадью 46500 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Новоахпердинское с/пос.;
- с кадастровым номером 21:08:140401:293 площадью 15500 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Новоахпердинское с/пос.
Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429353, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Новое Ахпердино, ул. Ленина, д. 46. Справки по тел.: (83532)6-32-37.

Администрация Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района (организатор торгов) сообщает о результатах открытого аукциона по продаже права на заключение договора аренды земельного участка, состоявшегося 26 сентября 2014 г. на основании постановления администрации Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района от 11.08.2014 № 67 "Об организации открытого аукциона" (извещение о проведении аукциона было опубликовано 20.08.2014 г. № 162 с изменениями от 27.08.2014 № 167):
лот № 1 - земельный участок категории земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенным использованием: для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 457700 кв.м., кадастровым номером 21:26:170301:147, местоположение: Чувашская Республика, Янтиковский район, Тюмеревское сельское поселение - победитель Восторгин О.С.

Администрация Канашского района информирует население района о предстоящем предоставлении земельных участков для сельскохозяйственного производства. Категория земель – земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование – для сельскохозяйственного производства. Срок аренды 10 лет.

№ п/п	Месторасположение	Кадастровый номер	Площадь, кв.м.
1	Канашский район, поле № 9 второго севооборота бывшего СХПК "Урожай", находящийся к востоку от д. Верхнее Девлизерово Канашского района Чувашской Республики	21:11:091302:66	1432000
2	Канашский район, земельный участок расположен в поле 1 С СХПК "Урожай"	21.11.090103:5	142800
3	Канашский район, VI поле 4 почвозащитного севооборота, в северной части 1 рабочего участка III поля полевого севооборота СХПК «Урожай», северная часть кадастрового квартала	21:11:090302:102	1523580
4	Канашский район, земельный участок расположен в южной части квартала	21:11:091302:76	639411
5	Канашский район, земельный участок расположен в юго-восточной части квартала 21:11:090303	21:11:090303:11	1296650
6	Канашский район, земельный участок расположен в юго-западной части квартала	21:11:090303:8	888278
7	Канашский район, земельный участок расположен в центральной части квартала	21:11:100302:17	1487931
8	Канашский район, участок расположен в северо-восточной части квартала, поле № 8 второго полевого севооборота, участок № 1;	21:11:070606:97	337494
9	Канашский район, I поле почвозащитного севооборота, II поле почвозащитного севооборота СХПК «Урожай», западная часть кадастрового квартала	21:11:090302:103	706461

Желающим приобрести вышеуказанные земельные участки обращаться с заявлением в администрацию Канашского района в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 2-84-80.

РАЗНОЕ ТЁРЛЁРЕН

780. Утерянные: квитанция А7 серии 0008 № 408869; полис "Добрый путь R2" серии 185 №№ 185054590, 185054591 ЗАО "МАКС" признает недействительными.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерё декабрён 13-мёшёнче тухать.

чăваш халăх хаçачё
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечё, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчё" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийё
Федерацин çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийёнче 2013 çулхи çу уйăхён 31-мёшёнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрацилене
"Хыпар" индексё – 54800, "Хыпар"-шăматкун"– 78353

Директор-тёп редактор В.В.ТУРКАЙ
С.П.СТЕПЧЕНКО – пёрремёш заместитель
М.М.АРЛАНОВ – коммерци директорё
РЕДКОЛЛЕГИ:
Г.А.МАКСИМОВ – тёп редактор заместителё
Н.Г.СМИРНОВА – культурăпа чăваш диаспорин пайён редакторё
А.А.ТАРАСОВ – тёп редактор заместителё
В.В.ТУРКАЙ – директор-тёп редактор
Ф.П.ЧЕРНОВ – яваплă секретарь – техника центрён пуçлăхё
Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА

Редакципе издатель адресё: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчё, 13, Пичет çурчё, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонёсем:
56-00-67 – директор – тёп редактор
56-33-64 – тёп редактор çумё
56-04-17 – коммерци директорё
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçёпе политика пайё
56-05-21 – журналист тёпчевёсен тата куçару пайё
56-08-62 – экономика пайё
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вёренў пайё
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайё
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайё
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийё:
28-83-70 – рекламăпа пёлтерўсен пайё
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайё
корр. пункчёсем:
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йёпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзён правленийё
Ёç кунё 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăматкунпа вырсарникунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электронлă почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчё» АУ техника центрёнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийёнче пичетленё. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчё, 13. 56-00-23 – издательство директорё.
РЕКЛАМĂПА ПЁЛТЕРЎСЕНЕ 316-мёш пўлёмре йышăнаççё. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечё. Калăпăшё 2 пичет листи. Рекламăпа пёлтерўсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тўлевлё информаци материалёсем "Реклама çиннен" федераци саккунён 2 ст. килёшўллён "Аталану çулёпе", "Ят-сум", "Ёç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççё.
Номере 10.12.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7392. Заказ 4765.